25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 МАЙ 24 ВЫРСАРНИКУН 119(6054) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Комбайнсемпе жнейкăсене вăхăтра юсаса хатĕрлер

Республикăри колхозсенче çурхи ĕçсем пысăк çĕкленупе пулса пыраççĕ. Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă приказпа хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем çураки ĕçĕсене кăçал нихăçанхинчен те пысăк хастарлăхпа тăваççĕ.

Çураки ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Ăнăçлăн акса хăварнă тырăсем часах пулса та çитĕç.

Партипе совет организацийĕсем умĕнче тата çĕрĕç органĕсемпе машинно-тракторнăй станцисем умĕнче тырпула пĕр тăкаксăр, вăхăтра пуçтарса кĕрес задача тухса тăрать. Çак ĕçе вăхăтра тата пысăк пултарулăхпа пурнăçласан çеç эпир ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлеме пултаратпăр.

Тырпулсене пухса кĕрес ĕç — васкавлă ĕç. Ăна хăй вăхăтĕнче туса ирттермелле. Тырпула вăхăтра, пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕни ялхуçалăхĕнчи ĕçсене тухăçлăн туса çитерни, фронта калама çук пысăк пулăшу пани пулать. Çак ĕçре машинно-тракторнăй станцисем тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. Кăçалхи çул уйрăмах тырпулсене комбайнсемпе ытларах пуçтарма тăрăшмалла, кашни комбайнпа, жнейкăпа туллин усă курмалла. Çак ответлă ĕçе тума республикăри машинно-тракторнăй станцисен лайăх хатĕрленсе тухмалла, мĕнпур комбайнсене, жнейкăсене халех юсаса çитермелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕ тата ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ иртнĕ çулти декабрĕн 23-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, кăçал комбайнсене пурне те июлĕн 1-мĕш тĕлне юсаса çитермелле. Анчах çак постановлене чылай машинно-тракторнăй станцисем начар пурнăçласа пыраççĕ.

Сĕнтĕр, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне районĕсенчи машинно-тракторнăй станцисем комбайнсене юсама пачах тытăнман. Сĕнтĕр МТС-ĕ комбайнсене иртнĕ çулти ĕçсене вĕçленĕ хыççăн актпа йышăнман. Иртнĕ çул вĕсене мĕнле пăрахнă, халĕ те çаплипех лараççĕ. Çуп-çапсемпе пылчăкран та тасатман, çĕççисене, сăнчăрĕсемпе чĕнĕсене те илсе хуман, çĕрмен пирки вĕсем тутăхса ларнă. МТС-ăн старши механикĕ Огиков ку тарана çитсе те комбайнсене юсама мĕнле пайсем çитменнине шута илмен.

Çавăн пекех Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне МТС-сем те комбайнсене юсама мĕнле пайсем кирлине шута илмен. Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕн директорĕ Ельмаков юлташ комбайнсене юсас ĕç кая юлса пынине кадрсем çитменнипе ăнлантарса парасшăн. Çав вăхăтрах иртнĕ çул комбайнерсем пулса ĕçленĕ çынсене тракторпа ĕçлеме янă.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташ апрелĕн 15-мĕшĕнче панă приказра машинно-тракторнăй станцисене тракторсене юсаса пĕтернĕ хыççăнах комбайнсене, молотилкăсене юсама тытăнма хушнă. Ку ĕçе тума комбайнерсене, вĕсен помощникĕсене, машиноведсене пурне те мобилизацилеме хушнă. Сĕнтĕрвăрри тата Етĕрне МТС директорĕсем ку приказа пурнăçламан.

Курссенчен вĕрентсе кăларнă комбайнерсене, иртнĕ çулсенче комбайнсем çинче ĕçленĕ çынсене пурне те ĕçе тăратмалла. Курссем организацилесе комбайнерсем хатĕрлеме халех тытăнмалла.

Кăçал пирĕн республикăри колхозсен уйĕсенче 368 комбайн ĕçлеме тивĕçлĕ. Паянхи куна машинно-тракторнăй станцисем мĕнпурĕ те 4 комбайн çеç юсаса çитернĕ. Комбайнсен моторĕсене 46 мотора çеç юсанă. Çапла пулсан та, чылай МТС-сенче комбайнсене юсама кадрсене мобилизацилемен. Вăрмар МТС-ĕнче комбайнсен моторĕсене юсас ĕçре пĕр çын çеç ĕçлет, Улатăр МТС-ĕнче 3 çын ĕçлеççĕ.

Машинно-тракторнăй станцисен комбайнсене, молотилкăсене юсас ĕçре çак кунсенчех татăклă улшăну тумалла. Ремонт ĕçĕнче ĕçлекен рабочисен ĕç условине лайăхлатмалла, комбайнсене хăвăрт тата çирĕп юсассишĕн пыракан социализмлă ăмăрту пур МТС-сенче те тивĕçлĕ вырăна çĕкленмелле.

Комбайнсене юсас ĕçре тракторсене юсанă чухнехи ĕç опытне анлăн сармалла. Кирлĕ чаçсене ытларах вырăнтах тăвассишĕн тăрăшмалла, кивĕ чаçсене юсаса çĕнетмелле, пуринпе те усă курма тăрăшмалла.

МТС руководителĕсем тырпулсене пухас кампанире кăçал уйрăмах ответлă пулса тăраççĕ. Тырпулсене кăçал пирĕн нихăçанхинчен те хăвăртрах, йĕркеллĕрех пуçтарса кĕмелле. Кунта кашни комбайн, молотилка, трактор, жнейка пĕр чарăнусăр, сехет пек тĕрĕс ĕçлемелле. Ĕçре большевикла çирĕп йĕркелĕх пулмалла. Тырпулсене пухас ĕçе хăвăрт тата пĕр тăкаксăр пурнăçлани—фронтра пысăк çĕнтерӳ тунипе пĕрех пулса тăрать. Кăна ăнăçлăн пурнăçлас тесен, машинно-тракторнăй станцисен кашни комбайна, молотилкăна лайăх юсамалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 22-мĕшĕнче **Харьков** енче пирĕн войскăсем, йышăнса илнĕ рубежсене çирĕплетсе, наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

Изюм—Барвенково енче пирĕн войскăсем противникăн атакисене сирсе пăрахса, ăна пысăк çухатусем кӳнĕ. Фронтăн ку участокĕнче виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче кăна нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 15.000 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

Керчь çурутравĕн хĕвелтухăç пайĕнче çапăçусем пулса пынă.

Майăн 21-мĕшĕнче нимĕçсен 37 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 19 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 21-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 85 танкĕпе танкеткине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 ытла автомашинине, 4 автоцистернине, боеприпассем турттарса пыракан 50 лавне, 3 полевой орудине, 6 минометне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 4 складне, горючин 2 складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи эшелона çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 4 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енче нимĕçсен фашистла войскисем чĕрĕ вăй тĕлĕшпе те, техника тĕлĕшпе те пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Пĕр участокра кăна 700 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ, 6 оруди, 10 пулемет, çар грузĕсем турттарса пыракан 11 автомашина тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем халăх пурăнакан пĕр пункта йышăннă та противникăнне 8 оруди, 17 пулемет, 6 миномет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли выртса юлнă.

* * *

Изюм—Барвенково енче кĕрешекен пирĕн пĕр дивизи пĕр кун хушшинче противникăн 11 атакине сирсе ярса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 3.000 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен çирĕн часть, сасартăк пырса çапса, нимĕçсене халăх пурăнакан пунктран хăваласа кăларнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла вĕлернĕ. 4 оруди, 5 миномет, 20 автомат тата винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Лейтенантăн Карпенко юлташăн танк экипажĕ тăшманăн 6 танкĕпе тĕл пулнă. Пирĕн танкистсем, танмар çапăçава хăюллăн йышăнса, нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă, теприне сиенленĕ.

* * *

Ленинград партизанĕсен отрячĕ, С. юлташ командир пулса ертсе пынипе, чугунçул линине сирпĕнтерсе янă тата противникăн çар эшелонне ӳпĕнтернĕ. Çавăнта салтаксем турттарса пыракан 28 вагон тата автомашинăсемпе танксем тиенĕ 12 платформа çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче Норвеги легионĕнчи 2-мĕш ротăран пĕр салтак Виори Баст тыткăна парăннă. Вăл çапла каласа панă: «Ăнăçлă май çитсе тухсанах, эпĕ пĕр иккĕленмесĕр Хĕрлĕ Çар енне куçрăм. Нимĕçсене эпĕ Норвеги халăхĕн чи усал тăшманĕсем тесе шутлатăп. Вĕсем ман тăван çĕршыва чуралантарчĕç. Кам нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешет, çав çынна норвежецсем хисеплесçĕ». Малалла Виори Баст çакна пĕлтернĕ: Норвеги легионĕ фронта килнĕренпе 2 уйăх çитнĕ, çав хушăра вăл пысăк çухатусем тӳснĕ. Легионри 800 салтакран 400—450 çынран ытла юлман.

* * *

Аяларахра нимĕçсен вĕлернĕ унтерофицерĕ Альберт Доринг çумĕнче тупнă çыруран хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр: «...Хам ăмĕрте эпĕ ниме те кăçалхи çуркуннепе çуллана çавтери хумханса кĕтнĕ пек кĕтменччĕ. Халĕ, эпĕ темĕн пек кĕтнĕ вăхăт çитсессĕн, акă мĕн паларчĕ: пире кунтах хăвараççĕ иккен. Пире улăштарĕç тесе шухăшламалли те çук. Пирĕн участокра вăйлă çапăçусем пыраççĕ, вырăсcем пирĕн оборонăна татса кĕчĕç те пирĕн орудисене тытса илчĕç. Илтнĕ сăмаха çăмăллăнах ĕненекенсем нумайĕшĕ хăйсен япалисене пуçтарса çыхса хучĕç, киле каймa хатĕрленсех çитрĕç. Вĕсен сăмахĕ çапла чĕ: «Пирĕн тĕп пароль—улшăнас та килелле». Анчах вĕсене вăйпа ирĕксĕрлесех урăх пароль пачĕç, ку пароль—вилĕм. Темиçе кун хушшинчех пирĕн полкра 400 çын пĕтрĕ. Вăл ĕнтĕ—пĕр масар».

* * *

Финсен çарĕнчен салтаксем тарасси вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Дезертирсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе правительствăпа командованин чрезвычайнăй мерăсем йышăнмалла пулнă. Магистральсемпе ялсем хушшинчи çулсем çинче гитлеровецсен патрулĕсем çӳреççĕ. Шюцкоровецсен уйрăм отрячĕсем дезертирсене шыраса çӳреççĕ, хуласенче, ялсенче, чугунçул станцийĕсенче вĕсем дезертирсене тытас шутпа унти халăха хупăрласа илсе тĕрĕслеççĕ.

Майăн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Харьков енче пирĕн войскăсем, хăйсем йышăннă рубежсене çирĕплетсе, наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

Керчь çурутравĕ çинче çав çурутравăн хĕвелтухăç пайĕнче çапăçусем пулса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

* * *

Фронтăн Харьков енчи участокĕнче пирĕн часть противника вăйлăн çирĕплетнĕ пунктран хĕссе кăларнă. Хăйсем чакнă чухне нимĕçсем 5 оруди, 12 пулемет, минăсен складне тата радиостанци пăрахса хăварнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделени, противникăн контратакине сирсе ярса, 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем танка хирĕç пемелли 2 оруди, 4 миномет, 60 винтовка тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Артиллерирен персе, тăшманăн батарейине пусарса лартнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче пирĕн войскăсем противник юханшыв урлă каçма хăтланнине путлантарса лартнă. Нимĕçсем каялла чакнă, вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çын ытла вилсе юлнă.

* * *

Сакăр кун хушши çапăçса, пирĕн танксен подразделенийĕ (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) нимĕçсен 14 минометне расчечĕсемпе пĕрлех, 18 огневой точкине, 28 дзочĕпе блиндажне, 6 автомашинине, 4 орудине, штаб автобусĕпе çăмăл машинăна пĕтерсе тăкнă. Çак вăхăт хушшинчех танкистсем 250 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Калинин фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн чаçсем противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 700 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, 5 танк тата артиллерин 4 батарейине пĕтерсе тăкнă. Зенитнăй пулеметран персе, нимĕçсен самолетне ӳкернĕ.

* * *

Старшина Шевчук юлташ винтовкăран персе «Мессершмитт-109» йышши самолета ӳкернĕ. Нимĕçсен самолечĕ пирĕн часть вырнаçса тăнă çĕре ӳкнĕ.

* * *

Лейтенант Вородеев, красноармеецсен пысăк мар ушкăнĕпе пĕрле, тăшманăн дзочĕ патне шуса пынă та унта гранатăсем ывăтнă. Пирĕн боецсем дзота кĕрсе унта пулнă 7 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕн гитлеровецсем оккупациленĕ чылай районĕсенче кĕрешекен партизансен отрячĕсене хирĕç нимĕçсен командованийĕ пысăк карательнăй экспедици янă. Партизансен отрячĕсем çакна кĕтсех тăнă. Юлашки 5 кун хушшинче темиçе отряд пĕрлешсе кĕрешнипе партизансем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 517 çынна пĕтерсе тăкнă, чугунçулсене юсаса çӳрекен поезда ӳпĕнтерсе янă, боеприпассен складне, чугунçул кĕперне тата шоссе çулĕ çинчи икĕ кĕпере сирпĕнтерсе янă, 2 оруди, 2 миномет, темиçе пулемет тата автомашинăсем пĕтерсе тăкнă. Партизансем нимĕçсен 3 танкне, бронемашинине стройран кăларнă тата винтовкăсем, пистолетсем, боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Арнольд К. çапла каласа панă: «Фронта килнĕ чухне чаранса тăнă вырăнсенче пире аманнă салтаксем Хĕрлĕ Çар çинчен каласа паратчĕç. Вырăссен авиаци, артиллери тата танксем нумай, тетчĕç вĕсем. Пирĕн ротăри салтаксем вăрса пĕтерсе лартасси тата харпăрхăй пурнăçне çăлса хăварасси çинчен каласма тытăнчĕç. Пĕр отделени тыткăна парăнма каласса таталчĕ. Хĕрлĕ Çар енне икĕ ушкăнпа каçма палăртнăччĕ. Пĕрремĕш ушкăна фронт урлă каçма хăтланнă чухне тытрĕç те мĕнпур салтаксен куçĕ умĕнче персе пăрахрĕç. Çакăн хыççăн эпир пĕчченшерĕн каçма йышăнтăмăр. Чи малтан эпĕ тыткăна парăнтăм. Пирĕн взводра Хĕрлĕ Çар енне каçма çирĕппĕнех йышăннă салтаксем 15 çын шутланаççĕ».

* * *

Замостье станцинче нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем советăн мирлĕ çыннисене 6 çынна çакса вĕлернĕ.

* * *

Югославири партизансем оккупациленĕ войскăсене пысăк çухатусем тӳстернĕ. Партизансем Итали чернорубашечникĕсен 7 батальонне çавăрса илнĕ те пĕтерсе тăкнă. Фашистла темиçе салтак кăна, тĕттĕм пулнипе усă курса, çавăрса илнĕ вырăнтан тухма пултарнă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хими промышленность Халăх Комиссариачĕн 757-мĕш номерлĕ комбинатне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Оборона продукцийĕ туса кăларас тĕлĕшпе Правительство панă заданисене кăтартуллăн пурнăçланăшăн Хими промышленность Халăх Комиссариачĕн 757-мĕш номерлĕ комбинатне **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав** орденĕ парса наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти майăн 21-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ленэнергон пиллĕкмĕш государственнăй электростанцине наградăласси çинчен

Ленинград хулине энерги парса тăрас тĕлĕшпе Правительство панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн Ленэнергон пиллĕкмĕш государственнăй электростанцине **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти майăн 21-мĕш.

Хĕрлĕ Çарăн начальство составне орденсемпе наградăлани

Хĕрлĕ Çарăн оперативнăй тата организациллĕ ĕçĕсем тĕлĕшпе Правительство панă задани сене ăнăçлăн пурнăçланăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн майăн 21-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх наградăланă:

ЛЕНИН орденĕпе — генерал-полковника Александр Михайлович Василевские, генерал-майора Арон Герцевич Карпоносова, генерал-лейтенанта Алексей Иванович Шимонаева наградăланă.

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе 30 çынна наградăланă.

ХĔРЛĔ ÇАЛТĂР орденĕпе 19 çынна наградăланă. (ТАСС).

ОБОРОНА ФОНДНЕ ХЫВМА ПĂРИ АКРĔ

ЭЛĔК. Вăрманкассинчи «Светлый путь» колхоз тĕштырăсене 9 ĕç кунĕ хушшинче пысăк пахалăхпа акса хăварчĕ. Оборона фондне хывма 2 гектар пăри акрĕ. Çак ĕçсене туса пĕтернĕ хыççăнах колхозниксем çĕрулми лартма тытăнчĕç. Çĕрулмине колхоз 10 гектар çине лартрĕ. Вăл шутран 35 центнер çĕрулмине яровизацилесе лартрĕ. Колхоз кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илме ĕмĕтленет.

М. КУСТИКОВ.

Тăванла пулăшу

СĔНТĔР. **(Хамăр корр., телефонпа).** Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи ĕçхалăхĕ валли районри колхозсем тырă пухаççĕ. Пурĕ 560 центнер тĕштырă пухнă.

«Авангард» колхоз нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма 12 центнер ыраш пама тата çураки планĕнчен иртт ерсе 5,77 гектар çине сĕлĕ акма йышăнчĕ. Çавăн пекех Кăпас ялсоветĕнчи «КИМ», «Заря» колхозсем 13-шер центнер, «Новый путь», «Колос» колхозсем 10-шар центнер тĕштырă параççĕ.

Районри колхозсем кăçал оборона фондне хывма çураки планĕнчен иртт ерсе 119. гектар çурă тырă акаççĕ.

Çуракинче пысăк ĕç тухăçлăхĕпе тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, Чăваш АССР Наркомземĕпе унăн политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

1. **ХĔРЛĔ ЧУТАЙ МАШИННО-ТРАКТОРНĂЙ СТАНЦИЙĔ** (МТС директорĕ **Г. И. Иванов** юлташ, политотдел начальникĕ **Л. З. Захаров** юлташ, старши агрономĕ **Власов** юлташ, старши механикĕ **Батышин** юлташ). МТС майăн 21-мĕш тĕлне çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 101 процент тултарнă. Ĕç малалла пырать, тракторсем ирхи çĕргме тăвас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăннă.

\-\-\-\-\-

Çуракине иртт ерес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕçсынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

33. Шупашкар районĕнчи **К. Е. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Е. Е. Петров** юлташ). Колхоз çуракине лайăх пахалăхпа 6 ĕç кунĕнче пĕтернĕ. Оборона фондне хывма планран иртт ерсе 2 гектар акса хăварнă.

34. Шупашкар МТС-ĕнчи трактористка **Е. Ф. Кудрявцева юлташ.** Вăл, урапаллă тракторпа ĕçлесе, кунсерен 6,5 гектар сухалать, норма — 4 гектар. Майăн 10-мĕшчен Кудрявцева юлташ 70 гектар сухаланă, 300 килограмм горючи перекетленĕ.

35. Сĕнтĕр районĕнчи **«Çĕнĕ Юнга» колхоз** (колхоз председателĕ **Ф. А. Яндушкин** юлташ). Колхоз тĕштырă культурисене 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ, мĕнпурĕ 202 гектар акнă. Оборона фондне хывма планран иртт ерсе 4 гектар акса хăварнă. **Виноградов** юлташ бригади тĕштырă культурисене ытти бригадăсенчен 2 кун малтан лайăх пахалăхпа акса пĕтернĕ. Колхозри сухаçăсем — **М. Комаров, А. Янтикова, К. Лугина** юлташсем кулленхи нормăна 160-шар процент тултарса пынă. Çуракинче акмалли пĕтĕм лаптăка колхоз лайăх сортлă, яровизациленĕ вăрлăхпа акса хăварнă, алăпа пачах акман, йăлтах машинăпа акнă. Тырă акакансем—**А. Ванюшин, П. Шурнеева** юлташсем кулленхи нормăна 130-шар процент тултарса пынă, конюхсем — **Н. Тепеев, Д. Ванюшин** юлташсем лайăх ĕçленĕ. Вĕсем пур лашасене те яланах лайăх пăхса усранă. Колхоз çĕрулми лартма массăллăн тытăннă.

36. Сĕнтĕр районĕнчи Муркавăш ялсоветне кĕрекен **С. М. Буденный ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Я. А. Кольцов** юлташ). Колхоз тĕштырă культурисене 6 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Оборона фондне хывма 1,5 гектар акса хăварнă. Çуракинче акмалли пĕтĕм лаптăка колхоз яровизациленĕ вăрлăхпа акса хăварнă. Сухаçăсем — **Спаский, Анисимов** юлташсем кулленхи нормăна 150-шар процент тултарса пынă. 72 çулти **П. Федоров** юлташ тырă акакан пулса ĕçленĕ, вăл кулленхи нормăна 200 процент тултарса пынă. Конюх **А. Иванов** юлташ лайăх ĕçленĕ. Вăл пăхакан лашасем пурте лайăх, мăнтăр.

37. Куславкка районĕнчи **«Правда» колхоз** (колхоз председателĕ **Тимофеев** юлташ). Колхоз тĕштырă культурисене 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ, мĕнпурĕ 144 гектар акнă. Оборона фондне хывма планран иртт ерсе 3 гектар акса хăварнă. **Н. Ерметьев, С. Кузнецов** юлташсен бригадисем 6 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ.

38. Куславкка районĕнчи **«Коммунист» колхоз** (колхоз председателĕ **С. М. Симаков** юлташ). Колхоз тĕштырă культурисене 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ, мĕнпурĕ 83 гектар акнă. Оборона фондне хывма планран иртт ерсе 2 гектар акса хăварнă.

39. Куславкка районĕнчи **«Красноармеец» колхоз** (колхоз председателĕ **И. Данилов** юлташ). Колхоз çуракине 8 ĕç кунĕнче пĕтернĕ. Оборона фондне хывма колхоз планран иртт ерсе 3 гектар акса хăварнă. **Смирнов** юлташăн бригади тĕштырăсене 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Бригада хăй ĕçне пысăк пахалăхпа туса пынă.

Пиравăр промышленноçĕн предприятийĕсен пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне организацилер

Ивановăри Фролов ячĕпе тăракан меланжевăй комбинатра тата Ореховăри хлопчатобумажнăй комбинатра ĕçлекен рабочисем, инженерно-технически работниксем тата служащисем чĕнсе калани

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене 1942 çулта пĕтĕмĕшпех çапса аркатас задача, Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ лартнăскер, пирĕн аслă тăван çĕршыври халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те ытларах та ытларах ӳссе пыракан тухăçлăхпа ĕçлеме тата пирĕн рабочисемпе хресченсен паттăр Хĕрлĕ Çарне хĕçпăшалсем, боеприпассем, тумтир тавраш сем тата апат-çимĕçсем мĕн май килнĕ таран ытларах парса тăма, пирĕн çĕршыври халăха куллен кирлĕ таварсем çителĕклĕ парса тăма хушать. Хĕрлĕ Çар вăйлăн пыра-пыра çапса тăшманăн çарĕсене аркатас кун, совет çĕрне фашистла тасамарлăхсенчен тасатас кун инçе мар ĕнтĕ.

Социализмлă ăмăрту фрончĕ сарăлса пырать, массăсен пултарулă хастарлăхĕ ӳссе пырать, пысăк ĕç тухăçлăхĕн мастерĕсем çĕршерĕн те пиншерĕн çуралса пыраççĕ.

Хăйсен тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçне лайăх пĕлсе тăрса, Ивановăри меланжевăй комбинатăн тата Ореховăри хлопчатобумажнăй комбинатăн текстильщикĕсем 1942 çулта хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илеççĕ:

Ивановăри Фролов ячĕпе тăракан меланжевăй комбинат тăрăх:

1. Кашни уйăхра планран иртт ерсе 140 пин метртан кая мар çитцă-пусма тĕртсе памалла.
2. Ĕçе лайăхлатнипе тата изобретенисем тунипе çĕршыв оборонин фондне пĕр миллион тенкĕ памалла.
3. Предприятисене çĕнĕрен ĕçлеме кĕрекен рабочисене профессисене вĕрентмелле.
4. Столовăя кăтартуллă ĕçлекен туса ямалла, подсобнăй хуçалăхăн продукцине ӳстермелле тата пĕчченшерĕн пахча-çимĕç туса илес ĕçе анлăн сарса ямалла.

Ореховăри хлопчатобумажнăй комбинат тăрăх:

1. Кашни уйăхра планран иртт ерсе 200.000 метртан кая мар хатĕр тавар туса памалла.
2. Кашни уйăхра планран иртт ерсе 250.000 çăмха çип туса памалла.
3. Оборудованипе лайăхрах усă курса ĕç тухăçлăхне 5 процент ӳстермелле.
4. Топливăпа электроэнерги расходлассин нормисене икĕ процентран кая мар чакармалла.
5. Пысăк квалификациллĕ арçын профессийĕсенче арçынсем вырăнне ĕçлеме çĕнĕрен 250 хĕрарăма вĕрентсе хатĕрлемелле.
6. Столовăйсенче рабочисен апатне лайăхлатмалла, подсобнăй хуçалăхăн продукцине ӳстермелле тата пĕччен шерĕн пахча-çимĕç туса илес ĕçе анлăн сарса ямалла.

Железнодорожниксемпе водниксем! Пирĕн фабрикăсене çĕрмамăкĕпе материалсем хăвăрт та пĕр тăтăш илсе пырса тăрăр!

Хими промышленноçĕнчи работниксем! Текстильщиксене сăрламалли сăрăсем тата химилле материалсем çителĕклĕ парса тăрăр!

Топливо промышленноçĕнчи работниксем! Пиравăр предприятийĕсене торфпа çĕркăмрăкĕ пĕр тăтăш парса тăрăр!

Эпир Совет Союзĕнчи пиравăр фабрикисенче ĕçлекен рабочисене, работницăсене, инженерсене, техниксене тата служащисене пиравăр предприятийĕсен пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне, государство планне пĕтĕмпех тата иртт ерсе пурнăçламашкăн пуçарса янă ăмăртăва хутшăнма чĕнетпĕр.

Фронтпа тыл валли тĕртсе тунă тавар ытларах парар!

Ленинăн никам çĕнтереймн ялавĕ айĕнче, аслă Сталин ертсе пынипе—малалла, çĕнтерӳ патне!

Пысăк пахалăхпа ĕçлесе, кашни гектартан 100 пăт тырă туса илер!

Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ пек ĕçлемелле

Суракин ĕçĕсем республикăра вĕçленсе пыраççĕ. Чылай районсенче колхозсем тĕштырă акас плана пурнăçларĕç. [illegible]

МТС-сем хушшинче те пример кăтартса ĕçлекенсем сахал мар. Чи лайăх ĕçлекен МТС-сенчен пĕри вăл Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ пулса тăрать. [illegible]

[illegible]

Мĕншĕн килнĕ-ха çак ăнăçлăх?

МТС руководителĕсем çамрăк трактористсене пулăшас ĕçе лайăх организацилесе пултарнă. Вĕсем трактористсем хушшинче социализмлă ăмăртăва [illegible]

Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕн газогенераторлă тракторсем чылай. [illegible]

Хĕрлĕ Чутай МТС тĕслĕхĕн опыт çакна кăтартса парать: [illegible]

Стахановла ĕçлесе, хĕрлĕ ялава хамăр алла илтĕмĕр

Пĕтĕм Союзри трактористсен ăмăртăвне хутшăнса, [illegible]

[illegible] премии илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Тракторист Николай Жидков юлташ сменăра 28 гектар акас вырăнне тăтăшах 35-шер гектар акать. Хăйĕн тракторне вăл яланах таса тытать, вăхăтра майларать, сĕрет, тасатать, кашни винт çирĕп ларнине сăнаса тăрать. Суракин малтанхи 15 кунĕнче унăн 65 гектар сухаласа 45 ĕçкунĕ илмелле пулнă пулсан, кăна вăл 10 кун хушшинче ĕçлесе илчĕ.

[illegible] хастарлăрах ĕçлеме тытăнчĕç. Хĕрлĕ ялава хамăр аллăрах ниçта та вĕçертместпĕр. Ĕçре талах та пысăкрах çитĕнÿсем туса çурхи ĕçсене хăвăрт вĕçлеме хамăрăн пĕтĕм вăя, пултарулăха хуратпăр.

Ф. АФОНДЕРКИН,
Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕн 2-мĕш номерлĕ трактор бригадин бригадирĕ.

Малта пыракан трактористсемпе танлашмалла

ЕЛЧĔК. (**Телефонпа**). МТС тракторĕсем кăçал суракине майăн 12—13-мĕш кунĕсенче çеç тухрĕç. Паянхи куна МТС хăйĕн суракинче тумалли ĕç планне 50 процент тултарчĕ. Чылай трактористсем ĕçе пысăк çĕкленÿпе туса пыраççĕ, социализмлă ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешеççĕ.

МТС-ăн 5-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Темяшкин юлташ) хăйĕн ĕç планне 65 процент пурнăçланă, çунтармалли япалана 800 килограмм перекетленĕ. Çамрăк трактористсем С. Чернов, А. Гордеев юлташсем У-2 тракторпа сменăра 7-шер гектар ытла сухалаççĕ. Трактористка Степанова СХТЗ тракторпа куллен нормăран ирттерсе сухалать. Çавăн пекех Ольга Пирогова, Ольга Чарчкина, М. Выйчитова, А. Соболева, П. Варламова трактористкăсем те СХТЗ тракторсемпе сменăра 7-шер гектар сухаласа пыраççĕ.

Анчах та калас пулать, суракинче трактор бригадисем пурте пĕр пек лайăх ĕçлемеççĕ. И. Арбузов ертсе пыракан бригадăра тракторсем час-часах чарăнса тăраççĕ. Ф. Петров тракторист 15 гектар çеç сухаланă-ха. Унăн тракторĕ пĕчĕк кăлтăксем пулсанах нумай вăхăт чарăнса ларать. 5-мĕш номерлĕ трактор бригадинчи И. Удалов тата К. Макова трактористсем ĕç нормине 60 процент çеç тултарса пыраççĕ. Çавăн пекех Спиридонов юлташ ертсе пыракан трактор бригади те ĕç планне майăн 19-мĕш тĕлне 20 процент çеç пурнăçланă.

И. ВАСИЛЬЕВ.

Çуракине ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр

ОКТЯБРЬСКОЕ. Туппай Ĕсмĕлти «Красная Чувашия» колхоз çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа 7 ĕç кунĕ хушшинче вĕçлерĕ. Тĕштырăсене 5 кун хушшинче акса хăварчĕ. Нумай пайне яровизацилесе тата сеялкăсемпе акрăмăр.

4-мĕш бригада лайăхрах ĕçлерĕ. Тĕштырăсене тата пăрça-ясмăк йышши тырăсене ку бригада пысăк пахалăхпа 4 кун хушшинче акса хăварчĕ. А. Чупраков, А. Маслов колхозниксем суха тунă çĕрте ĕç нормине тăтăшах 140—150 процент пурнăçласа пычĕç. Кунне 3-шер ĕçкунĕ ĕçлесе илчĕç.

Çуракинчи ĕçсем хĕрÿллĕн пынă вăхăтра колхозра пĕрлешÿллĕ столовăй лайăх ĕçлерĕ. Çуракинче ĕçлекен колхозниксене тата пахча-çимĕç лартакан колхозницăсене талăкне виçĕ хутчен апат çитерпĕ. Столовăй халĕ те ĕçлет. Çуракине вĕçленĕ пулсан та, кашни колхозник халĕ иртен пуçласа каçченех тăрăшса ĕçлет.

А. ОДИНЦОВ.

ТĔШТЫРĂСЕМ АКАС ПЛАНА ИРТТЕРСЕ ПУРНĂÇЛАРĂМĂР

ШАХАСАН. Ешкилтри «Большевик» колхоз кăçалхи çуракине пысăк çĕкленÿпе туса ирттерчĕ. Тĕштырăсене план тăрăх 218 гектар акас вырăнне 226 гектар акрĕ, ку ĕçе пысăк пахалăхпа туса, майăн 13-мĕшĕ тĕлне вĕçлерĕ. Оборона фондне хывма 3 гектар тырă акса хăварчĕ. Халĕ пахча-çимĕçсем тата çĕрулми лартатпăр.

Н. ХАРИТОНОВ.

Шкулсенчи пĕлÿ тĕрĕслевĕсем

Пĕлÿ тĕрĕслевĕсем ăнăçлăн иртсе пыраççĕ

Çуркуннехи пĕлÿ тĕрĕслевĕсене кăçал çутĕç органĕсем, шкулсем, учительсемпе шкул ачисем пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç. Отечественнăй вăрçăн условийĕсенче учительсем те, шкул ачисем те пысăк ответлăха туйса ĕçлени палăрать.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕсене хатĕрленнĕ тапхăрта чылай шкул ачисем, тĕрлĕ сăлтавсемпе вăхăтлăха шкула çÿреме пăрахнăскерсем, шкула таврăнчĕç. Советски районра 325 ача, Комсомольски районра 256 ача шкула каялла таврăннă. Шкула каялла таврăннисен хисепĕ Красноармейски, Улатăр, Сĕнтĕр, Шăмăршă, Йĕпреç районĕсенче те чылаях пысăк. 24 районран илнĕ сведенисем тăрăх, шкула каялла таврăннă ачасен хисепĕ республикăра 3 пинрен иртет. Çак ачасенчен чылайăшĕсем пĕлÿ тĕрĕслевĕсене тăма та тивĕçлĕ пулчĕç.

Республикăри шкулсенчен, çутĕç пайĕсенчен килекен малтанхи хыпарсем пĕлÿ тĕрĕслевĕсем нумай шкулсенче йĕркеллĕ пуçланса ăнăçлăн иртсе пыни çинчен калаççĕ. Первомайски, Комсомольски, Октябрьски, Калинински, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче, Шупашкар, Канаш хулисенче тĕрĕслеве тăма тивĕç илнĕ ачасем тĕрĕслевсене йĕркеллĕ пыраççĕ, сăлтавсăрах тĕрĕслеве пымасăр юлнисем йышлă мар. Сĕнтĕрвăрри районĕнче 5 шкулта ачасене вĕри апат çитереççĕ, Канаш, Улатăр хулисенче вĕренекенсем валли столовăйсем уçнă, Шупашкар хулинчи шкулсенче те вĕренекенсен буфечĕсене лайăхлатни курăнать.

Виçĕ предметпа çулталăк хушшинче начар паллăсем илсе тĕрĕслеве тăма тивĕçлĕ пулманнисен хисепĕ чылай шкулсенче пĕлтĕрхинчен чакнă е пачах та çук. Сăмахран, Калинински районри Туçи Мăратри туллимар вăтам шкулта IV—VII-мĕш классенче вĕренекен 174 ача пурте тĕрĕслеве тăма тивĕçлĕ пулнă.

Вĕренÿ çулĕ хушшинче тăрăшса ĕçленĕ шкулсен тĕрĕслев итогĕсем те паха пулса пыни курăнать. Хуракассинчи (Октябрьски р.) вăтам шкулта X-мĕш класра вĕренекен 25 ачаран 14 ача вырăс литературипе сочинени çырса «отлично» паллăсем илнĕ (учительница Мартьянова юлташ). Синкассинчи, Шаккăлти вăтам шкулсенче (Канаш р.) X-мĕш класра вĕренекенсем хушшинче сочиненипе начар паллăсем илни пĕрре те çук.

VII-мĕш классенче вĕренекенсем кăçал, пĕлтĕрхи пекех, вырăс чĕлхипе изложени çырчĕç. Иртнĕ çулта, уйрăмах ялти вырăсмар шкулсенче, вĕренекенсем изложенипе начар паллăсем нумай илнĕччĕ. Кăçалхи çул, вĕренÿ çулĕ хушшинче изложени çырма хăнăхтарас тĕлĕшпе учительсем çине тăнине пула, тĕрĕслевсенче изложенипе начар паллăсем илнисен хисепĕ чылаях чакни курăнать. Сăмахран, Комсомольскинчи вăтам шкулта VII-мĕш класра вĕренекен 23 ачаран изложенипе 4 ача «отлично», 7 ача «хорошо», 10 ача «посредственно» паллăсем илнĕ, начар паллăсем илни 2 ача анчах.

Çавăн пекех Хуракассинчи (Октябрьски р.) вăтам шкулăн VII-мĕш класĕнче те начар паллăсем виçĕ ача анчах илнĕ (учительница Львова юлташ).

Анчах тĕрĕслевсем пур çĕрте те ăнăçлăн иртеççĕ теме çук-ха. Етĕрне, Тăвай районĕсенче чылай шкулсенче вĕренекенсем тĕрĕслеве йĕркеллĕ пымаççĕ. Етĕрне районĕнчи Стрелецкинчи шкулăн IV-мĕш класĕнче тĕрĕслеве 3 ача анчах пынă. Çавăн пекех Нăрваш Кушкăри (Тăвай р.) туллимар вăтам шкулăн VII-мĕш класĕнче те тĕрĕслеве 3 ача анчах тăнă. Етĕрне районĕнчи шкулсенче вĕренекенсен 80—87 проценчĕ анчах тĕрĕслеве пырать. Октябрьски районри Шупашкар Ĕсмĕл шкулĕнче вĕренÿ çулĕ хушшинче ачасене вĕри апат çитерпĕ, анчах тĕрĕслевсем вăхăтĕнче вĕри апат çитерме чарăннă. Етĕрне районĕнчи шкулсенче те вĕри апат çитерессине организацилемен. Çак районсенчи çутĕç пайĕсемпе шкул директорĕсен тĕрĕслевсене ирттерес ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пымалла.

А. ОТАЧКИН.

Малтанхи кунсем çирĕп йĕркелĕхпе иртрĕç

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (**Телефон тăрăх**). Районри шкулсенче пĕлÿ тĕрĕслевĕсем организованно пуçланчĕç. Тĕрĕслевĕн малтанхи кунĕсем шкулсенче çирĕп йĕркелĕхпе иртрĕç.

Малтанхи кун район центрĕнчи вăтам шкулта вĕренекенсем пурте тĕрĕслеве пынă, учительсем те пурте хăйсен вырăнĕнче пулнă. 10-мĕш класра вырăс литературипе (çырассипе) пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттернĕ. Тĕрĕслевре 38 вĕренекен пулнă. Вĕсенчен «отлично» паллăсем илнисем — 4, «хорошо» — 18, «посредственно» — 13, «плохо» паллă илнисем — 3 çын.

7-мĕш класра вырăс чĕлхипе (çырса) 56 ачаран 27 ача «отлично», 16 — «хорошо», 9 — «посредственно», 4 ача «плохо» паллăсем илнĕ.

Аслă Çĕрпÿеленчи туллимар вăтам шкулта 4-мĕш класра вырăс чĕлхипе тĕрĕслев пулчĕ. Пĕтĕмпе 37 вĕренекен испытани тытрĕç. «Отлично» паллăсем — 7, «хорошо» — 5, «посредственно» — 20, «плохо»—5 ача илчĕç. 5-мĕш класра «плохо» паллă илнисем — 2 пулнă, 6-мĕш класра 6 ача «плохо» паллăсем илнĕ. Ку шкулта вĕренекенсем пурте тĕрĕслеве пухăннă.

Çак фактсенчен ĕнтĕ Аслă Çĕрпÿелĕнчи туллимар вăтам шкулта вĕренÿ пахалăхĕ кирлĕ вырăнтах тăманни курăнать. Унта тĕрĕслевре начар паллăсем илнисем йышлă. Шкул директорĕн вĕренÿре кая юлса пынă ачасене çуллахи вăхăтра, вĕсем начар паллăсем илнĕ предметсем тăрăх вĕрентес ĕçе организацилес пулать.

Районри ытти шкулсенче те пĕлÿ тĕрĕслевĕсем пулса пыраççĕ.

В. ИВАНОВА.
Районри çутĕç отделĕн инспекторĕ.

Шкул пахчине çĕрулми лартрăмăр

Шăхасанти вăтам шкулта вĕренекенсем майăн 15-мĕшĕнче шкул пахчине çĕрулми лартнă. Çĕрулмине шкул кăçал, академик Лысенко вĕрентнĕ пек, тăррисене касса яровизацилесе лартрĕ. Ытлашши юлнă çĕрулми вăрлăхне колхозсене панă.

А. ОРЛОВ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

ТĂШМАНĂН КОЛОННИСЕНЕ ПĔТЕРЕÇÇĔ

КАНТĂР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, майăн 20-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Пирĕн Харьков енче çапăçакан чаçсем, тăшман хаярлансах хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тăкса, малалла куçса пыраççĕ. Пирĕн боецсем вăйлăн хĕссе пынине нимĕçсем танксемпе тытса чарма хăтланаççĕ. Анчах та вĕсем хирĕç тăни çирĕппĕн çапăçакан совет танкисчĕсен, артиллеристсен, танка хирĕç кĕрешмелли пăшал расчечĕсен тата авиаци вучĕ айĕнче арканать-арканать кайять. Тăшманăн 14 контратаки пĕтсе ларчĕ. Çак контратакăсене вăл кашнинчех 30—40-шер танк кĕртсе пычĕ. Пирĕн чаçсенчен пĕри вăйлă çапăçура нимĕçсене пĕр кун хушшинче 42 танк çунтарса ячĕ. Гвардеецсен подразделенийĕн старшини орденоносец Грицько тытса пыракан танк фашистсен танкĕсем хушшине, пурне те çĕмĕрсе пыракан тăвăл пек, вăркăнса кĕрсе кайнă. Çавăнта пĕр çапăçура кăна вăл нимĕçсен 6 танкне пĕтĕм экипажĕ-мĕнĕпе, темиçе орудине, икĕ мотоциклне тата радиостанцине пĕтерсе тăкнă.

Çапăçури пултарулăх тĕлĕшĕнчен пирĕн бронебойщиксем те кая юлмаççĕ. Персе сиенленĕ, анчах та пуçăпах çĕмĕрсе пăрахайман нимĕç танкĕсем пирĕн окопсем урлă каçса бронебойщиксем ларакан вырăна çитсе кĕнĕ. Пирĕн боецсем окоп тĕпне анса тăнă та хурçă машинăсем умĕнче пĕр утăм та каялла чакман. Тăшман танкĕсемпе кĕрешес ĕçе артиллеристсем тата граната перекенсем хутшăннă. Çакăнта Лянсин тата наводчик Митягин юлташсем икĕ танка персе çĕмĕрнĕ. Оборонăн малти линине татса кĕнĕ нимĕç машинисене пурне те пĕтерсе тăкнă. Совет воинĕсем çакăн пек çирĕппĕн тăрса çапăçнипе фашистсен механизациллĕ колоннисем сехетрен сехете пĕтсе пыраççĕ.

ПИРĔН АВИАЦИН ĂНĂÇЛĂ ÇАПĂÇĂВĔСЕМ

КАНТĂР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, майăн 20-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Летчиксем тăшманăн танксен колоннисене, аэродромĕсене, хирĕç тăмалли узелĕсене вăйлăн çапса аркатаççĕ.

Нимĕç танкĕсен пысăк колонни пыни çинчен разведка чаçăн командованине пĕлтернĕ. Çапăçусенче тĕрĕсленнĕ летчик старши политрук Неделько ертсе пыракан пирĕн бомбардировщиксем чи кĕске срок хушшинче пĕлĕт çине вĕçсе хăпарнă.

Пирĕн чаçсем малалла куçса пырассине чарас тесе, фашистсен танкĕсем çула тата ун тăрăхĕнчи уйхире карттласа хунă пулнă. 600 метр çÿллĕшĕнчен летчиксем противникăн танксен колонни çине пикировка туса тапăннă. Бомбăсем пăрахса, фашистсен 15 танкне пĕтерсе тăкнă. Ытти летчиксем те ăнăçлăн çапăçнă. Виçĕ хутчен вăйлăн тапăннипе тăшманăн вуншар танкĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Хĕвеланăçнелле каймалли çула тасатнă.

Пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пĕр кун хушшинчех нимĕçсен 54 танкне, вуншар автомашинисене, орудийĕсене пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăтрах фашистсен 50 самолечĕ, 31 автомашини пĕтнĕ. Фашистсен пĕр самолетне сывлăшри çапăçусенче ÿкернĕ, ыттисене аэродром çинче пĕтерсе тăкнă.

Сывлăшри пысăк çапăçусенче, нимĕçсен 60—70 самолетне хирĕç çапăçнă çĕрте, кашнинчех пирĕннисем çĕнтернĕ.

Д. ЩУКИН.

Гитлеровецсем Минскра юнлă террор тăваççĕ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 22-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Вильнăра тухса тăракан гитлерла хаçат «Вильнаер цейтунг» пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем нумаях пулмасть Вильнăра 150 çынна Германие хирĕçле ĕçсем туса тăраççĕ тесе айăпласа асаплантарса вĕлернĕ.

Франци халăхĕ гитлерла оккупантсене çавтери кураймасть

СТАМБУЛ, майăн 22-мĕш. (ТАСС). Францире апат-çимĕç тĕлĕшпе пурнăç начарланнăçемĕн начарланса пырать. Çурçĕр Африкăран илсе пыракан продуктсенчен çуррине нимĕçсем тытса илеççĕ, 20 процентне итальянецсем валли хăвараççĕ, юлашки 30 процентне каллех нимĕçсемех илеççĕ, вĕсем ăна «оккупациллĕ çар валли илнĕ» пек туса илеççĕ. Парижра тата ытти хуласенче магазинсем пушă-пушах лараççĕ. Тумтир таврашĕ те тупма çук, мĕншĕн тесессĕн тĕртсе тунă таварсене оккупантсем туртса илеççĕ.

Халăхăн анлă масси тăрăхни ÿссе пырать. Магазинсем умĕнчи черетсенче час-часах çапла калани илтме пулать: «Нимĕçсене Лавальпе пĕрле Францирен хăваласа кăларса ярас пулать!»

Брестра пурăнакан çынсем нумаях пулмасть Францин çурçĕр çыранĕ çине тапăннă чухне ÿксе çĕмĕрĕннĕ тăватă акăлчана—летчика чаплăн пытарнă. Французсем летчиксен вилĕ тăпри çине чечексем хунă. Оккупациллĕ влаçсем çавăншăн халăха 8 куна çăкăрсăр хăварнă тата 17 сехет те 30 минута иртнĕ хыççăн урамсене тухма чарса лартнă.

Вĕçев кадрĕсем хатĕрлес ыйтупа Оттавăра конференци пухăннă

НЬЮ-ЙОРК, майăн 22-мĕш. (ТАСС). Оттавăра (Канадăра) вĕçев кадрĕсем хатĕрлес ыйтупа пухнă конференци уçăлнă. Çав конференцире пĕрлешнĕ 14 çĕршывран 100 делегата яхăн пынă. Конференци председателĕ пулма Англи делегацийĕн пуçлăхĕ—авиаци министрĕн заместительне Бальфуса суйланă.

Бальфус хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: Канадăра летчиксем вĕрентсе хатĕрлени Британи империйĕн хальхи вăхăтри сывлăшри наступленийĕ валли база пулса тăрать тесе шутлатăп эпĕ, тенĕ. Хĕрлĕ Çар гитлерла йыткĕтĕвĕсене хирĕç кĕрешни çинче чарăнса, Бальфус çапла каланă: мана пĕлтĕр кĕркунне Мускавра пулнă чух «вырăссем чаплăн та вăйлăн тăрăшнине пăртак курма телей килчĕ», «çав хăрушă кунсенче, хула хăрушлăхра тăнă кунсенче, ăна совет войскисен хĕллехи геройла наступленийĕ çăлса хăварчĕ», тенĕ. «Эпĕ вырăс çарĕн механизациленĕ темĕн пысăкĕш вăйне куртăм,—тенĕ Бальфус,—вăл вăя типçĕр çинче те, шыв çинче те, сывлăшра та çапăçма пухнă, вăл паттăрлăх тата пĕтĕмпе çĕнтеричченех кĕрешме тем пек çунса тăнине çуратса тăрать. Çакă вăл совет войскисемпе граждăнĕсене хавхалантарса тăрать», тенĕ.

К Ĕ С К Е Н

▲ Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен конгресĕ çĕнĕрен подводнăй лодкăсем тума ирĕк паракан закон проектне йышăннă. Çав закон проекчĕ халиччен тума йышăннă подводнăй лодкăсен пĕтĕм водоизмещенине татах та 200 пин тонна таран ÿстерме хушать. Конгресс йышăннă закон проектне президент Рузвельт алă пусса çирĕплетнĕ.

▲ Майăн 1-мĕшĕнче пĕр подводнăй лодка Бразилин «Паапалит» ятлă пароходне торпедăласа путарни çинчен пĕлтернĕччĕ. Халĕ Америкăн самолечĕсем çав подводнăй лодкăна хăйне те путарнă. (ТАСС).

Пĕремĕксем пĕçерекен фабрикăра

КАНАШ. Пĕремĕксем пĕçерекен фабрикăри рабочисемпе работницăсем политикăллă пысăк çĕкленÿпе Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн 130-мĕш номерлĕ приказне сÿтсе яврĕç. Фабрика коллективĕ май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пысăк çитĕнÿсем турĕ. Апрель уйăхĕнчи программăна фабрика 117,8 процент тултарчĕ, продукци хакне 5 процент йÿнетрĕ. Коллектив иккĕмĕш кварталти программăна июнĕн 28-мĕш тĕлне тултарма, продукци хакне 5 процент йÿнетме, пĕтĕм тупăшран 10 процентне перекетлеме пулчĕ.

Халĕ фабрика коллективĕ çĕнĕ çĕкленÿпе ĕçлет. Никитина юлташăн бригади май уйăхĕн малтанхи çурринчи ĕç планне ытлашшипех тултарчĕ. Уйрăмах комсомолка Терентьева юлташ бригади стахановла ĕçлет. Вăл май уйăхĕн малтанхи 15 кунĕнчи плана 105 процент тултарчĕ. Апрель уйăхĕнчи плана 453 процент тултарнă. Фабрикăра стахановецсен йышĕ те ÿссех пырать. Ананьев, Севастьянова пекарьсем нормăна куллен 109—118 процент тултараççĕ. Иртнĕ уйăхра кая юлса пынă рабочисем те нормăна тултарса ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсен шутне, сăмахран, Баданова, Скворцова юлташсем кĕреççĕ.

Юлашки вăхăтра фабрика лайăх пахалăхлă продукци туса кăларакан пулчĕ. Ку тĕлĕшпе фабрика директорĕ Захватова, мастер В. Иврукова тата М. Бодимова юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем иртнĕ кунхи çитменлĕхсем çинчен рабочисемпе куллен калаçу туса ирттереççĕ, ыран мĕнле ĕçлемеллине вĕрентеççĕ. Çавна май ĕç тухăçлăхĕ ÿсе, продукци пахалăхĕ лайăхланса пырать. Фабрика коллективĕ çĕнĕ тĕслĕ продукцисем: лапша, сăра, квас туса кăларма тытăнчĕ. Май уйăхĕнче 5 тонна лапша туса кăларнă.

П. СЕРГЕЕВ.

Супăнь тăваççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). «Красный Октябрь» артель кĕçĕ çумалли супăнь тума вĕренсе çитрĕ. Çак кунсенче вăл сăнавлă супăнь туса кăларнă. Супăнĕн пахалăхĕ лайăх. Артель супăнь тăвас ĕçре вырăнти чĕртаварпах усă курать.

ПУШАРТАН СЫХĂ ТĂРАÇÇĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Исаково ялсовечĕн исполкомĕ колхозсенче вут-кăвартан сыхланас ĕçе лайăх организациленĕ. Вут-кăварпа кĕрешекен ирĕклĕ дружина ĕçне лайăхлатнă. Дружинăн начальникĕ В. Павлов юлташ ĕçе пысăк активлăхпа туса пырать.

Ялсоветĕнчи колхозсенче вут-кăвара хирĕç кĕрешмелли мероприятисене туса çитернĕ.

Колхозниксен çуртĕсенчи кăмакасен мăрйисене тĕрĕслесе тухнă. Исаково ялĕнчи виçĕ колхозникĕн пÿрчĕсенчи кăмака мăрйисене пăсса çĕнĕрен тутарттарнă, кашни çурт умнех каткасемпе шывсем ларттарнă, колхозăн тырă кĕлечĕсем патĕнче, выльăх-чĕрлĕх фермисенче хуралсем тăратнă. Павлов юлташ хуралсене тăтăшах тĕрĕслесе тăрать.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШРОССНАБСБЫТ
имеет в продаже:
обозный инвентарь, бочки, бочкотару, клепку, стройматериал, лесощепные и хозяйственные материалы, лесохимические—уголь, смолу, деготь.
Организации, имеющие потребность в указанных материалах, должны в декадный срок представить в Росснабсбыт заявки.
По истечении срока заявки могут остаться без удовлетворения.
ЧУВАШРОССНАБСБЫТ.

ЧУВАШМЕТРОВЕСУ
ТРЕБУЕТСЯ
счетовод.
Одиночки обеспечиваются жилплощадью.
Адрес: гор. Чебоксары, ул. Ворошилова, 46.

ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ПЕДАГОГИЧЕСКИЙ И УЧИТЕЛЬСКИЙ ИНСТИТУТ
в гор. Мариинском Посаде объявляет прием студентов на все курсы и факультеты на 1942—43 учебный год.
ПЕДАГОГИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ имеет факультеты: истории (подготовляющий преподавателей истории для средних школ и техникумов); языка и литературы с отделениями: чувашского и русского языка и литературы (подготовляющее преподавателей чувашского и русского языка и литературы в чувашских средних школах и техникумах) и русского языка и литературы (подготовляющее преподавателей русского языка и литературы для средних школ и техникумов); физики и математики с отделениями: физики (подготовляющее преподавателей физики для средних школ и техникумов) и математики (подготовляющее преподавателей математики для средних школ и техникумов) и естествознания (подготовляющий преподавателей биологии и химии для средних школ и техникумов).
Срок обучения в Пединституте — 3 года. На I курс принимаются без испытания все граждане, окончившие в 1941 и 1942 г.г. средние школы на «отлично» и «хорошо», а остальные, окончившие в эти годы средние школы, принимаются без испытаний при наличии вакансий.
УЧИТЕЛЬСКИЙ ИНСТИТУТ с 2-годичным сроком обучения готовит учителей для 5—7 классов средней школы и НСШ и имеет отделения: истории, чувашского и русского языка и литературы, физики и математики, естествознания и географии.
На I курс принимаются без испытания все лица, окончившие средние школы в 1941 и в 1942 г.г. Окончившие 9 классов средней школы на «отлично» и «хорошо» принимаются без испытаний, остальные — при наличии вакансий.
Испытания будут происходит с 10 по 29 августа. Начало учебных занятий 1 сентября. Все студенты обеспечиваются общежитием, отличникам предоставляется стипендия.
Заявления о приеме и документы (автобиография, аттестат в подлиннике, три фотокарточки и справку об отношении к воинской обязанности для военнообязанных) направлять по адресу: Чувашская АССР, гор. Мариинский Посад, Пединститут.
ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 801 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: л: